# «Костыльсене яланлăхах пăрахасчĕ...»

Кашни кунах ирпе Атапайĕнчен Муркаша килекен «Газель» çинчен вокзалта пĕр хĕр ача анать. Костыльсемпе тата портфельпе. Юлташĕсемпе пĕрле тăрăшсах шкула утать.

Айккинчен сăнасан хĕр ача урисене хуçнă пулĕ тесе шутлама пулать. Анчах алăри костыльсем пĕр-икĕ уйăхлăх кăна мар çав...

Елена тесе чĕнеççĕ ăна килте. Тăванĕсем те çаплах калаççĕ. Юлташсем хушшинче вара вăл – Лена. Муркашри вăтам шкулта 10 «а» класра вĕренме пуçларĕ кăçал Елена Васильева. Телее, кунта хĕр ача инвалид пулнине «асăрхамарĕç» те. Тиркесе пăхакан та, тăрăхласа калаçакан та çук унпа. Класс ертÿçи Надежда Валерьевна Толстова пĕрремĕш кунтанпах Ленăна ачасемпе явăçтарассишĕн тимлет. «Класра «ют» ачасем ан пулччăр», – тет вăл. Лена та хăйне шкулта лайăх йышăннине калать. «Пурте пулăшма тăрăшаççĕ», – савăнсах пĕлтерет хăр ача.



Çак савăнăç ик-виçĕ çул каяллах апла пулман унăн. Вăл ун чух инвалид коляски çинчен те тăрайман. Вун ултă çул коляска çинче... Юлташсем выляççĕ, чупса çÿреççĕ. Ленăн вара темĕнле тăрса утас килсен те ларма тивнĕ. Паллах пуçа тĕрлĕ шухăш та пыра-пыра кĕнĕ. Анчах Лена – çирĕп кăмăллисен шутĕнче. Тăрăшсан лайăххи пулатех, тет вăл. Тата амăшне чунтан тав тăвать. Кĕске калаçу вăхăтĕнчех «анне мар пулсан...» тесе Лена темиçе хутченех калама ĕлкĕрчĕ.

Çуралнă чух чиперех çуралнă хĕр ача, кайран вара тем амакĕ тупăннă ун тĕлне: урисем çине пусайман вăл. Çуралнă чух травма пулнă тесе калакан врачсем те, чир кайран çеç пуçланнă текеннисем те пулнă Ленăн пурнăçĕнче. Сăмахсемпе вара инçех каяймăн.

Тăххăрмĕш класс вĕренсе пĕтерет Лена. Çак таранччен çуркуннепе кĕркунне амăшĕ ăна шкула коляскăпа илсе çÿренĕ. Хĕллехи кунсенче çунашка пулăшнă. Утасси питĕ йывăр пулнă хĕр ачашăн: стенасенчен тытăнса, аран-аран вырăнтан вырăна куçма пултарнă вăл. Йывăр. Тепĕр чух упаленме те тивнĕ. Анчах чăтнă. Амăшĕ те, хĕрĕ те чăтнă. Ыран лайăхрах пулĕ-ха тесе кашни кун тăрăшнă...

16 çул тултарсан Ленăна Шупашкара медицина комиссине чĕнеççĕ. Тĕрлĕ специалистсем пăхаççĕ, тĕрĕслеççĕ хĕр ачана. Вĕсенчен пĕри вара: «Операци туса пăхма килĕшместĕр-и? Тен ĕç-пуç лайăхланĕ?» – тесе сĕнет.

Килтисем пĕрле ларса шутлаççĕ, канашлаççĕ. Çĕр процентлă шанчăк никам та паман-çке. Операци тума килĕшеççĕ. Малтан пĕр урине, кайран теприне «çĕр çине тăма» пулăшаççĕ специалистсем.

Анчах тÿрех утасси киносенче çеç пуль çав. «Коляска хыççăн костыльсем çине икĕ çул хушши тăтăм», – тет иртнине аса илсе Лена. Икĕ çул – пĕр хускану çумне тепĕр хускану, пĕр минут çумне тепĕр минут. Мĕнле пысăк савăнăç вĕт-ха вăл вун ултă çул хыççăн! Ленăшăн та, ашшĕ-амăшĕшĕн те – нимĕнпе танлашайми савăнăç. Пĕчĕк чухнех костыльсемпе утма вĕренес тесе мĕн чухлĕ тăрмашман пуль хĕр ача! Кăлăхах. Акă вăл – костыльсемпе тунă пĕрремĕш утăм. Вун ултă çула çитсен.

«Малтанхи пирки, хальхи пирки шутлатăп та ... Маншăн ку тĕлĕнтермĕш пек. Коляска çинчен нихăçан та тăрасса шутламан», – аса илет хăйĕн хурлăхне Лена, çав хушăрах савăннине те палăртать.

– Ку тĕлĕнтермĕш хыççăн малаллахи çинчен нумайрах шутлатăн пулĕ. Тĕллевсем еплерех? – ыйтатăп унран.

–Темиçе çул малаллинех тĕлленместĕп. Манăн вăтам шкула лайăх вĕренсе пĕтересчĕ. Тăхăр класс пĕтернĕ хыççăн тăватă çул – пысăк тăхтав пулчĕ-çке. Юрать, анне яланах пулăшать. Анне мар пулсан... Пушă вăхăт та çукпа пĕрех темелле. Врачсем çырса панă тĕрлĕ хусканусем тăвассипе нумай ĕçлемелле. Тăрăшсан çеç сывлăх лайăхланассине шанатăп, – пĕлтерет Лена хăйĕн шухăшне.

Пурнăçне лайăхлатас тесе вăл шкулта та тăрăшулăх кăтартать. Паллах, тăватă çул хушшинче шкул программи те улшăннă. Ăна вара чăтма пулатех.

Лена нихăçан та пĕччен мар: унпа юнашар яланах юлташĕсем, тăванĕсем. Ашшĕпе амăшĕ. Çавăнпах пулĕ унăн вăй-халĕ сывлăх енĕпе Турă кÿрентерменнисенчен темиçе хут нумайрах. Тĕллевĕсем çирĕпрех. Чунĕ те таса.

«Костыльсене хăçан та пулин яланлăхах пăрахасчĕ ман. Коляска çинчен тăма пултартăм вĕт», – çапларах Ленăн паянхи шанчăкĕ.

Çемйипех тăрăшнине кура ĕмĕчĕ пурнăçлантăрччĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Паянхи кун ыйтăвĕсемпе**

# Малтан хамăр çине пăхмалла, кайран ыйтмалла

Вăхăт хĕл еннех шăвать. Часах шурă юр таврана пĕтĕмпех хуплĕ. Анчах кашни ялтах туса çитерейми ĕçсем пур: урамсенче, çул хĕррисенче, çырмаллă вырăнсемпе пĕвесем çумĕнче тимĕр-тăмăр е çÿп-çап куписем чылай.

Нумай чух эпир çулсем япăх, асфальт хăçан пулатьши тетпĕр. Хамăр хыççăн тирпейлеме вĕренсен. Республика Президенчĕ те, район пуçлăхĕ те çакăн пирки яланах калаççĕ-çке. Паллах, ялти старостăсемпе депутатсем, вĕсемпе пĕрле ытти çынсем тăрăшмасан асфальт çул та сарăнмĕ, пăрăхсенче шыв та юхмĕ.

Юлашки вăхăтра çынсем «тирпейленсех» кайрĕç. Килти çÿп-çапа (вутра çунтарма пулать пулсан та!) урама ÿркенмесĕрех тухса тăкаççĕ. Выртаççĕ вара çырмасенче парниксенчен юлнă çĕтĕлсе пĕтнĕ пленкăсем, пластик кĕленчесем, картун курупкасем... Вучах чĕртсе мĕншĕн тĕтĕм кăларас тетпĕр-ши?

Тирпейсĕр ялсене вара çулĕсем те чи кайран çитĕç. Ку паллă.

Акă Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин пĕлтернĕ тăрăх, çÿп-çапа ялтан турттарса тухма килĕшÿ çырмалла тесен, Çурлатăрисем «çÿп-çапа урама тухса тăкмастпăр» тесе хуравланă. Вăхăт иртнĕ çемĕн вара пĕве пуçĕнче чăн-чăн «свалка» пулса ларнă. Çут çанталăк сыхлавĕн прокуратури Муркаш ял тăрăхне икĕ пин тенкĕне яхăн штафлать.

Е тата çак ялсемех çăвĕпех шывсăр пурăннă темелле. Ку вара шывпа усă курнишĕн вăхăтра укçа тÿлеменнипе те çыхăннă. Шыв башнине те пăхса тămалла вĕт. Укçа тÿлемесĕр никам та ĕçлесшĕнех мар паян. Акă паян кунччен те Н. Ядыковăн 5 пин тенкĕ ытла парăм, И. Пушкинăн – 700 тенкĕ таран. Шаптак ялĕнче те парăмçăсем сахал мар: А. Викторова (2546 тенкĕ), Т. Волкова (2440 тенкĕ), В. Кольцов (961 тенкĕ)...

Пур магазин таврашĕнче те вара купипех пушă эрехсăра кĕленчисем выртаççĕ. Çакна сутуçăсем пуçтарнине курсан чунра лайăх мар туйăм çуралать. Утайман-калаçайман ача хыççăн амăшĕ тирпейленĕ пекех пулса тухать-çке. Çав вăхăтрах кашни магазин умĕнче урнăсем пур. Кĕленчене чăтаймасăр магазин таврашĕнчех пушатнă хыççăн урнăна пăрахсан алă татăлса ÿкмелле мар пек те... Стакан тытма вăй пур пулсан çак çăмăл ĕçе те тумаллах. Унсăрăн çÿпçаппа кĕленче сапаланнипех чирлесе кайăпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Спорт**

# Çамрăк спортсменсен пысăк çитĕнĕвĕсем

Çак сăн ÿкерчĕкре эсир район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсене (сулахайран сылтăмалла) Сергей Черкашина, Андрей Тимофеева, Николай Багдасаряна тата вĕсен тренерне С.В. Черкашина (хыçалти ретре) куратăр. Сергей Черкашин – Раççей спорт мастерĕ. Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче 60 килограмлă виçе категорийĕнче Тольятти хулинчи спорт мастерĕсен турнирне хутшăннă, 3 тытăçăва та çĕнтерÿпе вĕçленĕ, вăл шутран 2 тытăçăва вăхăт çитиччен. Çапла вара тивĕçлипех 1-мĕш вырăн йышăннă, Раççей спорт мастерĕн ятне тепĕр хут çирĕплетнĕ.

Андрей Тимофеев вара ноябрĕн 12–17-мĕшĕсенче Хусан хулинче 60 килограмлă виçе категорийĕнче спорт мастерĕсен турнирĕнче вăй виçнĕ. 1-мĕш вырăн йышăнса вăл та Раççей спорт мастерĕн ятне тепĕр хут çирĕплетсе панă. 4 тытăçуран пĕрне вăхăт çитиччен çĕнтерÿпе вĕçленĕ.

Николай Багдасарян та ку турнира хутшăннă. Вăл юниорсем хушшинче ăмăртать пулин те, хăйне аслисен ушкăнĕнче те тĕрĕслесе пăхма хăраса тăмасть. Ку ăмăртура вăл 57 килограмлă виçе категорийĕнче 3-мĕш пулнă.

Боксерсен секцине çÿрекен Раççей спорт мастерĕсенчен тепри вăл – Александр Никитин. Вăл ку ята иртнĕ çул Пермь хулинче иртнернĕ ăмăртусенче тивĕçнĕ.

Декабрь уйăхĕнче Сочире бокс енĕпе яшсем хушшинче Раççейре мала тухассишĕн ăмăртусем пулса иртĕç. Унта хутшăнма вара районтан Николай Скворцов (48 килограмлă виçе категорийĕ) путевка çĕнсе илнĕ. Çак чыса вăл Çĕнĕ Шупашкарта профсоюзсен тĕп канашĕн кубокне çĕнсе илнĕ май тивĕçнĕ.

Хальхи вăхăтра асăннă спорт секцине 60 ачана яхăн çÿрет.



Вĕсен спортри çитĕнĕвĕсем кунран-кун ÿсĕмлĕрех те сулăмлăрах. Çамрăк спортсменсенчен виççĕн Раççей спорт мастерĕсем, тепĕр виççĕн спорт мастерĕн кандидачĕсем. Çакăн та вара ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн аслă тренерĕн С.В. Черкашинăн, О.А. Сютруков тренерăн, «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн тренерĕн М. Николаевăн тÿпи пĕчĕк мар. Малашне те ăнăçу сунатпăр çамрăк спортсменсене.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ÿкерчĕкĕ.**


**Пĕлтерÿсем. Объявления**

**Чÿк уйăхĕн 29-мĕшĕнче Москакасси вăтам шкулĕнче Москакасси шкулне уçăнăранпа 100 çул çитнине халалланă уяв иртет. Çак шкулта вĕрентнĕ учительсене, ĕçленĕ çынсене, шкултан вĕренсе тухнисене, уява килме кăмăл тăвакансене – пурне те йыхравлатпăр. Уяв 11 сехетре пуçланать.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.**
**Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 8-13.**

**Спутниковое телевидение**
**от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95.**
**Спутниковый интернет. 6-20.**

**Индивидуальному предпринимателю Вязову Андрею Николаевичу требуется маляр мебельного производства. Зарплата высокая. Звонить по тел.: 2-25-74 с 8.00 до 17.00. 2-5.**

**Продается автомобиль ВАЗ-2105 на запчасти.**
**Тел.: 8-908-842-71-59.**

**ООО «Лотос» продает мотоблоки, банные печи.**
**Принимает на работу поваров, продавцов, слесаря, шиномонтажника.**
**Адрес: Рыкакасы. Тел.: 8-927-848-84-30. 1-2.**

**Продаем с доставкой ячмень, отруби.**
**Тел.: 8-919-679-96-97. 1-3.**

**Отдел экономики администрации Моргаушского района ЧР объявляет конкурс на предоставление офисного помещения и оргтехники в аренду на льготных условиях начинающим субъектам малого и среднего предпринимательства. Начальный размер арендной платы – в размере фактических затрат на организацию работы Бизнес-Инкубатора. Адрес для ознакомления с условиями конкурса и подачи заявок – 429530, ЧР, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 311. Дата проведения конкурса – 19 декабря 2008 г. Дата и время окончания приема заявок – 12 часов 00 минут 19 декабря 2008 г.**

**Январь уйăхĕнче çиччĕмĕш хут пăруламалли хĕрлĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-995-75-41, 8-927-852-18-60.**

**ООО «Жилкомсервис» сообщает, что задолженность населения за пользование водой на 1 ноября 2008 года составляет 367 тыс. руб., в том числе:**
**по Б. Сундырскому СП – 110 тыс. руб.;**
**по Кадикасинскому СП – 165 тыс. руб.;**
**по Юнгинскому СП – 79 тыс. руб.;**
**по Москакасинскому СП – 14 тыс. руб.**
**Несвоевременная оплата приводит к сбоям водоснабжения населения. Просим оплатить задолженность до 1 декабря 2008 года. В случае неоплаты ООО «Жилкомсервис» будет вынуждено начислить пени и прекратить подачу воды.**
**Администрация ООО «Жилкомсервис».**


СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ хуçалăхра нумай çул хушши сысна ферминче вăй хунă
**Анна Максимовна**
**АРХИПОВА**
пенсионерка, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Шомикри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта нумай çул хушши вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ тата директор пулса ĕçленĕ
**Станислав Михайлович**
**СУСАНИН**
сарăмсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.**
**Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Николаева Н.Н.**
**Номер подписан 18.11.2008 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3608.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.